27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
28
ЫТЛАРИКУН
233(6728) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ПЕТРОВА

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем паян, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, Чехословаки çĕрĕнче МИХАЛЬОВЦЕПЕ ГУМЕННЕ хулисене — çулсен паха узелĕсене тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене турт са илнĕ.

МИХАЛЬОВЦЕПЕ ГУМЕННЕ хулисене тытса илессишĕн пына çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ГРЕЧКО генерал-полковникăн, ГАСТИЛОВИЧ генерал-майорăн, ГОРДЕЕВ генерал-лейтенантăн, ЗАПОРОЖЧЕНКО генерал-майорăн, ВЕДЕНИН генерал-майорăн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорăн, ДРЕМИН генерал-майорăн, ШУБА полковникăн, ГРИНЧЕНКО генерал-майорăн, ГЛАДКОВ генерал-майорăн, ЛИСИНОВ генерал-майорăн, БЕЖКО генерал-майорăн, ПРОХОРОВ генерал-майорăн, ДУДАРЕВ генерал-майорăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, УГРЮМОВ полковникăн, ТЕТЕНКО полковникăн, ЧЕРНЫЙ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРИОФИЛЛИ„ артиллери генерал-майорĕн БРИЧЕНОКĂН, артиллери генерал-майорĕн НАЙДЕНКОВАН, ЧЕНГЕРИ полковникăн, ЖИГА полковникăн, БРОЗГОЛЬ полковникăн, МИРОНОВ полковникăн, ХАНОВИЧ полковникăн, ЦИВЧИНСКИЙ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ЖИБУРКУСАН ПАВЛЕНКО полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ШИРОБОКОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн РАЙКИНАН, СЕРОВ полковникăн, МОРУС полковникăн, ХОПКО полковникăн, ОЛЬХОВЕНКО подполковникăн, ВАСИЛЬЕВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НАНЕЙШВИЛИН, авиаци генерал-майорĕн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорĕн КОТЕЛЬНИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ЛАКЕЕВАН, ЧУК полковникăн, ОБУХОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГОВОРОВАН, ЖУРИН полковникăн, БАРАШ полковникăн, ДАВИДЕНКО полковникăн, БАРЦАЛОВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАТВЕЕВАН, БЕЛЯНЧИК полковникăн, НЕКРАСОВ полковникăн, ЕФИМОВ полковникăн, СТЕПАНЯН полковникăн, НУЖДИН подполковникăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, МИХАЛЬОВЦЕПЕ ГУМЕННЕ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, МИХАЛЬОВЦЕПЕ ГУМЕННЕ хулисене турта илнĕшĕн, салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, МИХАЛЬОВЦЕПЕ ГУМЕННЕ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, пурне те, чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе пикама пăхăнмаллăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

И. Д. Папанин контр-адмирала Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Правительство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата Çурçĕрти тинĕс çулне алла илес ĕçе пĕлсе ертсе пынăшăн, çуралнăранпа 50 çул çитнĕ май, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Çурçĕрти тинĕс çулĕн главнăй управленин начальникне Иван Дмитриевич Папанин контр-адмирала Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура мала тухнă финанс органĕсене премилесси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ финанс органĕсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Советски район (районри финанс отделĕн заведующийĕ Свешников юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Малинин юлташ) мала тухнине палăртнă. Вăл халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 84,2 процент тултарнă, вăл шутра—налогсем енĕпе 62,5 процент, ялхуçалăх налогĕ енĕпе 56,2 процент, заем укçине пухас енĕпе 207,9 процент, страховани укçине пухас енĕпе 42,0 процент тата государство тупăшĕсен планне 199,1 процент тултарнă. Советски районри финанс отделне ăмăртура палăрнă финанс работникĕсене премилеме 8.000 тенкĕ укçа панă тата районри финанс отделĕн заведующине Свешников юлташа уйрăмăн 1.000 тенкĕ парса премиленĕ.

Шупашкар районне (финанс пайĕн заведующийĕ Алексеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташ), халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 56,6 процент тултарнăскерне, ăмăртура палăрнă финанс работникĕсене премилеме 5.000 тенкĕ укçа панă тата финанс отделĕн заведующине Алексеев юлташа уйрăмăн 800 тенкĕ парса премиленĕ.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитетĕнче

КАНДИДАТ ДИССЕРТАЦИЙĔСЕМ ÇИНЧЕН

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитечĕ аслă шкулсен тата наукăпа тĕпчев институчĕсен совечĕсем кандидат диссертацийĕсене мĕнле сӳтсе-явнине пăхса тухнă.

Вăрçă пуçланнăранпа диссертаци парса хӳтĕленĕ çынсен хисепĕ чылай ӳснĕ. Кăçалхи пĕррремĕш çур çул хушшинче кăна 1.000 çын ытла диссертаци парса хӳтĕленĕ. 1942 çулта çулталăк хушшинче хăйсен наукăллă произведенийĕсене 1.200 çын хӳтĕленĕ. Диссертаци парса хӳтĕленĕ çынсем хушшинче предприятисемпе учрежденисен ертсе пыракан работникĕсем нумай. Советсем пăхса тухнă произведенисенчен нумайăшĕ наука тĕлĕшĕнчен чылай паха пулса тăрассĕ. Анчах советсем начар диссертацисене йышăннисем те пулкаланă.

Комитет аслă шкулсен директорĕсене официальнăй оппонентсене тĕплĕрех суйласа илме тата «Ученăй степеньсемпе званисем çинчен» СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленире кăтартнă требованисене аслă аттестаци комиссийĕ контроллесе тăрассине вăйлатма хушнă.

Ленин ячĕпе тăракан государство библиотекинче çав хӳтĕленĕ диссертацисене сыхласа усрамалли хăйне уйрăм фонд тăваççĕ. (ТАСС).

СССР НАУКА АКАДЕМИЙĔН ÇĔНĔ ИНСТИТУЧĔ

СССР Наука академийĕ çĕнĕ институт —естествознани институчĕ — тăвать. Çав институт пĕтĕм тĕнчери естествознанин, уйрăмах та вырăссен естествознанин историйĕн ыйтăвĕсене тĕпчемелле. Кунсăр пуçне, ăна вырăс наукин классикĕсенчен юлнă наука пуянлăхне сыхласа усрама та тата пичетле-пичетле кăларма хушнă.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çав институтăн ученăй советне çирĕплетнĕ. Ученăй совета çаксем кĕнĕ: академик В. А. Комаров (вăл — институт директорĕ), хисеплĕ академик Н. А. Морозов, академиксем — В. И. Вернадский, Н. Д. Зелинский, С. И. Вавилов, В. А. Обручев, А. М. Деборин, А. Н. Крылов, В. П. Волгин, В. П. Потемкин, Б. Д. Греков, Е. В. Тарле, Л. А. Орбели тата ытти сем те. (ТАСС).

БЕЛОРУССИРЕ ЯЛХУÇАЛĂХНЕ МЕХАНИЗАЦИЛЕКЕНСЕН ШКУЛĔСЕМ УÇАЛНА

Белорусси Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ялхуçалăхне механизацилекенсене вĕрентсе хатĕрлеме шкулсем нумай организацилет. Çав шкулсенчен трактористсем, комбайнерсем, механиксем тата МТС-семпе колхозсен ремонт работникĕсем вĕренсе тухаççĕ.

Механизаторсен 12 шкулĕ ялхуçалăхĕнче ĕçлеме 8.000 специалиста яхăн вĕрентсе кăларассĕ. Кунсăр пуçне, МТС-сен темиçе пин тракторисчĕпе механикĕ хăйсен квалификацине кĕске срокла курссенче вĕренсе хăпартассĕ. (ТАСС).

Туркмен ССР-ĕнчи Туркмен-Калинск районри «Гуч» колхозри колхозникĕн Тагач Узбекăн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче 11 ывăлĕ çапăçассĕ. Тагач Узбек хăй çĕрмамăк хирĕнче ĕç лет.

Ӳкерчĕк çинче: колхоз бригадинче Тагач Узбека (вăл варринче ларать) хăйĕн ывăлĕ янă çырăва вуласа парас çĕ.

К. ТОМАШЕВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Вольтер çуралнăранпа 250 çул çитни

СССР НАУКА АКАДЕМИЙĔН ЧАПЛА ЛАРĂВĔ

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче Ученăйсен Мускаври Çуртĕнче СССР Наука академийĕн чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Ана французсен аслă просветителĕ Вольтер çуралнăранпа 250 çул çитнĕ ятпа пухнă.

Ларăва Наука академийĕн вице-президенчĕ А. Ф. Иоффе уçнă. Унтан СССР Наука академийĕн президенчĕн В. Л. Комаровăн умсăмахне вуласа панă.

— Эпир пурăнакан кунсенче, — тесе çырать В. Л Комаров, — ăспа ирĕклĕхе çиеле кăларассишĕн кĕрешнĕ кунсенче, француз халăхĕн чаплă ывăлĕ Вольтер çырчисем уйрăмах паха пулса тăраççĕ. Вольтер вăл пĕтĕм тĕнчери культурăн пĕр пĕтĕм тапхăрĕ пулса тăрать. Унăн ячĕ ăс çĕнтерессине пĕлтерет, вăл, çын ăсĕ пекех, нихăçан та вилмĕ. Вольтер çынна çын пусмăрланине, тĕрĕс туманнине, раса тĕшмĕшĕсене çав тери курайман, вĕсемпе кĕрешнĕ. Вольтер пĕтĕм тĕнчери халăхсен культурине, чĕлхине, историне питĕ хисепленĕ. Вăл Российăпа, вырăссен историйĕн 1-мĕш Петр патшара ларнă вăхăтри саманипе, питĕ интересленнĕ. Пĕтĕм тĕнчевалли Вольтера ӳстерсе панă халăх халĕ юн тăкса çапăçса, нимĕç пусмăрлăхĕнчен ирĕке тухрĕ. Вольтера вăтам ĕмĕрĕн хура мĕлкисем курайман пекех, ăна халь фашистла ирсĕрсем кураймаççĕ.

Юбилей кунĕнче эпир тăшмана татăклă нах çĕнтерес чаплă кун çинчен шухăшлатпăр. Çавăн чухне этемлĕх, юнлă тискерлĕхсенчен хăтăлса, ăспа тĕрĕслĕх ялавĕ айĕнче малалла прогресс çулĕпе кайĕ.

Вольтер историре мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен В. П. Волгин академик доклад туса панă. Вольтер наука, философи, литература тĕлĕшпе мĕн тунине, вăл государство тата право çинчен мĕн калаНИне тĕплĕн пăхса тухса, докладчик: французсен аслă просветителĕ хăйĕн темиçе тĕрлĕ ĕçĕсене общество тĕллевĕсене, обществăри кĕрешӳĕн интересĕсене пăхăнтарса пынă, тет. Çакă вăл Вольтерăн историллĕ сăнлăхĕн чапĕ пулса тăрать, тет Волгин академик. Вольтерăн çак активлă, кĕрешӳллĕ гуманизмĕ, саманасемпе классен позицийĕсем тĕрлĕ пулнине пăхмасăрах, Вольтерăн сăнне ĕмĕрлĕхе чĕрĕ те кăмăллă туса хурать. Халĕ прогреспа тĕрĕслĕх реакцичи хăрушă вăйĕсене хирĕç историре пулман пек вăйлă кĕрешнĕ вăхăтра, тĕрĕсмара тата пусмăрлăха, икĕ питлĕ пулнине кураймаН Вольтер, ăспа этемлĕх çиеле тухассине ĕненнĕ Вольтер пирĕншĕн уйрăмах хаклă çын пулса тăрать.

Профессор Н. В. Нечкина Вольтер Российăпа мĕнле çыхăнса тăни çинчен, французсен аслă просветителĕ вырăссен историйĕпе, культурипе, вырăссен çавăн чухнехи обществăллă пурнăçĕпе çав тери интересленни çинчен доклад туса панă. Вольтер Росссия историне 7 çул хушши çырнă. Россия историйĕнче ăна пуринчен ытла 1-мĕш Петр çинчен çырасси хавхалантарнă. Профессор Нечкина Вольтер Россияри деятельсем патне çыру çӳретни çинчен интереслă даннăйсем илсе кăтартнă.

Вольтер çурални 250 çул çитнине асăнса тунă чаплă ларăва çынсем нумай пухăннă, унта чи паллă историксем, философсем, лингвистсем, литературоведсем пынă. Ларăва Франци республикин Вăхăтлăх Правительствин представителĕ Гарро господин тата Францин Совет Союзĕнчи Çар миссийĕн пуçлăхĕ Пети генерал пынă.

(ТАСС).

УЧИТЕЛЬСЕН ÇĔНĔ КАДРĔСЕНЕ ВĔРЕНТСЕ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

РСФСР-ти чылай облаçсенче 10 çул вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăксене учитель пулма вĕрентекен курссем уçăлнă. Çав курссенче 10 уйăх вĕрентеççĕ. Ирĕке кăларнă облаçсенче (Сталинград, Смоленск облаçĕсенче т. ыт. те) çавăн пек курссенче халĕ 4.000 çынна яхăн вĕренет. Республикипе мĕн пурĕ 25.000 учитель ытла вĕрентсе хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

Колхоз уйхирĕсене çемçетме удобрени çителĕклĕ пухса хатĕрлер!

Кăçалхи ялхуçалăх çулĕ республикăра ăнăçлăн вĕçленсе пырать. Нумай колхозсем ĕнтĕ тырпула çапса пуçтарас ĕçсене йăлтах вĕçленĕ, государство умĕнчи парăмсене парса татнă, халĕ вăрлăх фончĕсем хываççĕ тата колхозсен тупăшне валеçме хатĕрленеççĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче тăрăшса ĕçлени ахаль пулмарĕ: çĕршер колхозсем гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тырă туса илчĕç, вĕсем колхозниксене ĕç кунĕ пуçне 2—3-шер килограмм паха тырă валеçсе параççĕ.

Вăйлă тырпул вăл хăй ăссĕнех ӳсмест. Вăйлă тырпул туса илес тесен, колхозниксен çине тăрса ĕçлеме тивет. Çуллахи вăхăтра кăна мар, пĕтĕм çулталăк тăршшĕпех çине тăрса ĕçлемелле. Çакна ăнланман юлташсем вара чылай колхозсемпе районсенче тупăнаççĕ. «Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр, начар мар тырпул туса илтĕмĕр, çитес çулхи уйхир ĕçĕсем часах пуçланмаççĕ-ха, унччен хатĕрленме вăхăт пулĕ-ха, çавăнпа та халĕ, кĕркуннепе хĕл вăхăтĕнче, кăштах канма та юрать», теççĕ çав юлташсем. Ун пек юлташсен канмалли вăхăчĕ вара чылая пырать. Суха тума вăхăт çитмесĕр вĕсем плугсемпе сӳресене хатĕрлемеççĕ, акма вăхăт çитиччен сеялкăсем çинчен аса илмеççĕ, авăн çапма тытăниччен молотилка çине çаврăнса пăхмаççĕ. Вăхăт çитсен тăвăпăр-ха, теççĕ вĕсем, вара мĕн çуркуннеччченех канса пурăнаççĕ. Çак йăлапа пурăнакансем, паллах, вăйлă тырпул туса илме пултараймаççĕ. Халĕ пирĕн канасси çинчен мар, килес çул татах та вăйлăрах тырпул туса илесси çинчен ытларах шухăшламалла.

Тырпул тухăçлăхне ӳстермелли майсем нумай. Çав майсенчен чи кирлĕреххи вăл —çĕре çемçетесси пулса тăрать. Пуриншĕн те паллă, çĕре çемçетмелли лайăх япала вăл—тислĕк тата ытти вырăнти удобренисем. Колхозăн вырăнти удобренисем мĕн чухлĕ нумайрах, унăн çĕрĕ те çавăн чухлĕ çемçерех, унăн тырпул та çавăн чухлĕ нумайрах. Çавăнпа та республикăри малта пыракан колхозсем вырăнти удобренисене (тислĕке, кĕле т. ыт. те) çулран çулах ытларах пухса хатĕрлеççĕ те вĕсемпе пĕлсе усă кураççĕ. Вĕсем халăх сăмахне — «ытларах тăк тислĕкне, тулли пулĕ кĕлетре» тенине асра тытаççĕ. Вăрнар районĕнчи колхозсем 1944 çулта тислĕк пухса хатĕрлемелли тата хире кăлармалли плана 117,6 процент, кĕл пухса усă курмалли плана 119 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемелли плана 102 процент тултарнă. Советски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Çĕрпӳ, Чурачăк тата ытти районсенчи колхозсем те хире тислĕк кăлармалли плана чылай ирттерсе тултарчĕç. Çав вăхăтрах начар ĕçлекен районсем те пулчĕç. Сăмахран, Шăмăршă районĕ хире тислĕк кăлармалли плана 36,7 процент кăна, Куване районĕ 55 процент кăна тултарнă, çĕре çемçетме торф хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Килес çул вăйлă тырпул туса илес тесе çĕре çемçетме тислĕк тата ытти удобренисем ытларах пухса хатĕрлес тата вĕсемпе тĕрĕс усă курас тĕллевпе Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ нумаях та пулмасть ятарласа постановлени йышăнчĕç. Çав постановлени тăрăх, республикăри колхозсенче кăçалхи кĕркуннепе хĕл вăхăтĕнче 1.300 пин тонна тислĕк пухса хатĕрлесе хире кăлармалла, çĕре çемçетме 200 пин тонна торф, 90 пин центнер кĕл, 60 пин центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемелле, 65 пин тонна компост туса хумалла. Совнаркомпа парти Обкомĕн бюровĕ вырăнти удобренисем пухса хатĕрлеме кашни районах çирĕп заданисем пачĕç, çав задание районсенче халех колхозсемпе уйхир бригадисем патне çитерме хушрĕç.

Колхозсен уйхирне çемçетме çителĕклĕ таранах удобренисем пухса хатĕрлесси — ялхуçалăх работникĕсем умĕнче тăракан пысăк задача пулса тăрать. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вĕсен çине тăрса ĕçлемелле, нумай мероприятисем пурнăçа кĕртмелле. Тислĕк нумайрах пултăр тесе, витесен урайне улăм, торф сарас ĕçе организацилемелле, кашни фермăна тислĕк хатĕрлеме заданисем памалла. Кашни колхозрах тата бригадăрах тислĕке хире турттарас тĕлĕшпе ялан ĕçлекен колхозниксене уйăрса хумалла, вĕсене лашасем тата транспорт инвентарĕсем çирĕплетсе памалла. Тислĕк турттарас ĕçре чи малтан ĕневăкăрсемпе ытларах усă курма тăрăшмалла. Вырăнти удобренисем турттаракан колхозниксене кунсерен мĕн чухлĕ турттармаллине кăтартса заданисем памалла. Хире кăларнă тислĕке пысăк купа туса пирчетсе купаламалла, вăл купасенче 100 лавран кая мар пулмалла. Тислĕке пуринчен малтан кок-сагыз, махорка, кантăр, йĕтĕн, çĕрулми, пахча-çимĕç, тулă акмалли хирсене, вăрлăх участокĕсене кăларас пулать.

Кунсăр пуçне колхозри кашни çуртра тата колхозниксен килĕсенче кĕл пухас ĕçе организацилемелле, пухнă кĕле усрама ятарласа вырăн уйăрмалла, ку тĕлĕшпе ĕçлеме уйрăм колхозника хушмалла. Кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухас енĕпе те çавăн пек йĕркех тумалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ пĕлтĕрхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, колхозниксене тислĕк, кĕл тата ытти удобренисем панăшăн ĕçкунĕсем çырса парассине кашни колхозрах пурнăçа кĕртсе пымалла.

Колхозсен фермисенче тата колхозниксен килĕсенче компост тăвас ĕçе йĕркелемелле, компост тунă çĕрте тĕрлĕ çӳп-çапсемпе, торфпа, улăмпа, фекалипе усă курмалла.

Çапла ĕнтĕ, вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес тата хире турттарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем нумай. Вĕсене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçа кĕртни пире килес çул тухăçлă тырпул туса илме пулăшмалла. Апла пулсан, çак питех те кирлĕ агротехникăллă мероприятие пурнăçласси-шĕн колхозсенче халех кĕрӳллĕ те аплă кĕрешӳ пуçарса ямалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем Чехословакире ЧОП хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре НЕМЕЦКА ПОРУБА, ПОВСА, КУШИН, КЛОКОЧОВ, ГАЖЕН, ЯСТРЕБЕ, ИНЯЧОВЦЕ, БОТЯНЫ, МАЛЫЙ ТАРКАН, ВЕЛИКИЙ ТАРКАН ялĕсене туртса илнĕ.

Венгрире пирĕн çарсем ОРЕГ-ЧАНАЛОШ, КАКĂШ, ТАРНАСЭНТМАРИЯ, КЕЕКХАРАС, ДЭМАНТ ялĕсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 56 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 27 самолетне персе ӳкернĕ.

НОЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем ноябрĕн 26-мĕшĕнче Чехословаки çĕрĕнче çулсен паха узелĕсем тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсем пулса тăракан МИХАЛЬОВЦЕПЕ ГУМЕННЕ хулисене тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГОРБОК, ЧАБИНЕ, ПАПИН, ЗУБНЕ, СНИНА, УДАВСКЕ, КАМЕНИЦА, МЫШЛИНА, ВИННЕ, ЗБУДЗА, ЛАСТОМИР, БУДКОВЦЕ, БЕША, ЛЕЛЕС ятлă пысăк ялсем тата ГОРБОК ЧАБИНЕ, СНИНА, ЦИРОЦКЕ, ДЛУГЕ, БУДКОВЦЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Венгри çĕрĕнче пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн ХАТВАН хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 22 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пирĕн ту çинчи улăхпа малалла куçса пыракан чăссене Снина ятлă пысăк ял патĕнче тăшман хытă хирĕç тăнă. Гуменне хули патне пымалли çулсене хӳтĕлеме нимĕçсем çирĕплетнĕ район туса хунă. Тусем хушшинче тăшмантан аякран иртсе кайса тата фронтран çав тери хăвăрт атакăласа, пирĕн çарсем Снина районĕнче тăшмана аркатса тăкнă. Йĕпе юр çунине тата çăра тĕтре тăнине пăхмасăрах, совет чăçĕсем тăшманпа çапăçса 20 километр малалла кайнă та Гуменне хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ. Пирĕн ытти чăссем, наступленине вăйлатса пырса, çумăрсем хыççăн сарăлса кайнă Лаборец шывĕ урлă каçнă та Михальовце хулине — чугун çулсен тата шоссе çулĕсен паха узелне туртса илнĕ. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсенчен 14 тупă, 7 паровоз, 350 чугун çул вагонĕ тата ытти трофейсем тытса илнĕ. 560 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Венгрире пирĕн çарсем Хатван хулине туртса илнĕ. Тăшман çав хуларан хирĕç тăмалли хăватлă узел туса хунă. Нимĕç командованийĕ çарсене Хатван хулине темĕн чухлĕ вăй пĕтмелле пулсан та хăйсен аллинче тытса тăма çирĕп приказ панă. Пирĕн кавалеристсем, çĕрле çулйĕрсĕр тата пылчăклă вырăнта ашса пырса, тăшмантан айккипе иртсе кайнă та Задьва шывĕ çинчи кĕпере тытса илнĕ. Çапла вĕсем тăшманăн Хатван хулинчи гарнизонĕн каялла чакмалли çулĕсене пӳлсе лартнă. Çав вăхăтрах совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем нимĕçсене кăнтăр енчен тата кăнтăр-хĕвелтухăç енчен атакăланă та хулана вăркăнса кĕрсе кайнă. Вăйлă çапăçура тăшмана аркатса тăкнă. Тăшман чăçĕсем, хăйсен хĕçпăшалĕпе техникине пăрахса хăварса, тарма тытăннă. Анчах та çул çинче вĕсене советсен углă çар чăçĕсем атакăланă та сапаласа янă. Кун каçиччен пĕр пин гитлеровеца çитиpĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 8 танкне çунтарса янă, Нимĕçсемпе венгерсен 750 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кăнтăр хĕвеланăçнерехре пирĕн разведка отрячĕсем тăшмана атакăланă. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пирĕн боецсем лайăх позицисем тытса илнĕ. 8 хир тупри тата 9 пулемет тытса илнĕ. 40 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире çĕрле нимĕç пехотин пĕр роти пирĕн часть тăракан вырăна хĕсĕнсе кĕме хăтланнă. Пирĕн боевой охранени тăшман разведчикĕсене вăхăтра асăрханă та пăшалсемпе тата пулеметсемпе пеме тытăннă. Кĕске çапăçура нимĕçсен темиçе вунă салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтерчĕ те тăшмана каялла хăваласа янă.

Совет летчикĕсем Тройбург чугун çул станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Станци территорийĕнче пушарсем тухнă, пушарсенче темиçе взрыв пулнă.

* * *

Югославире пирĕн çарсем нимĕçсен 44-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен ушкăнне тыткăна илнĕ. 131-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Алоиз Сечеги çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизи юлашки вăхăтченех Италире тăратчĕ, унта çапăçатчĕ. Нумай пулмасть, салтаксене—дивизи чаçĕсене канма Австрие куçаратпăр, тесе пĕлтерчĕç. Анчах та пире командовани çавăн пек каласа улталани часах палăрчĕ. Австрие кантарас вырăнне дивизие Югославие илсе килчĕç те совет çарĕсене хирĕç çапăçăва кĕртсе ячĕç. Ноябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн полка çул çинчен тӳрех вырăс позицийĕсене атакăлама приказ пачĕç. Атака путланса ларчĕ: 1-мĕшпе 2-мĕш батальонсем уйрăмах йывăр çухатусем тӳсрĕç. Çапăçăва кĕриччен ротăсенче 80-шар салтак шутланатчĕ. Халĕ 5-мĕш ротăра 12 çын, 8-мĕш ротăра 18 çын, 6-мĕш ротăра мĕн пурĕ те 5 çын кăна юлчĕ».

Эсэсовецсен 31-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтаксем Карл Тифентелерпе Иозеф Каус çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизие çак çулхи сентябрь уйăхĕнче турĕç. Вăл дивизире пĕтĕмпех Югославире пурăннă нимĕçсем. Вăрçăн малтанхи çулĕсенче Югославире пурăнакан нимĕçсем нумайĕшĕ эсэсовецсен çарĕсене хăйсен ирĕкĕпе кайрĕç. Халĕ нимĕçсен çарне хăйсен ирĕкĕпе каякансем çук ĕнтĕ. Дивизие фронта яма тытăнсан, салтаксем çартан тарма пуçларĕç. Сăмахран каласан, пĕр ротăран 27 салтак тарчĕ, вĕсем мирлĕ халăх тумтирне тăхăнса тарçĕç. Çак ĕç паллă пулсан, командовани темиçе подразделени мотоциклистсене уйăрчĕ те вĕсене автоматсем пачĕ. Вара дивизи колоннисене çав мотоциклистсем çаврăнса илсе хураллаcа пычĕç. Анчах та çартан тарасси чарăнмасть. Салтаксем нумайĕшĕ мĕнле майпа та пулин малти позицисенчен тарма тăрăшаççĕ».

1944 çулхи финанс планне пĕтĕмпех тултарар!

А. МАТВЕЕВ
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Пирĕн республикăра ноябрĕн 25-мĕшĕпе декабрĕн 25-мĕшĕ хушшинче 1944 çулхи финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх иртет. Финанспа совет органĕсен хăйсен мĕнпур работникĕсене, колхозсенчи тата ялти актива уйăхлăха ăнăçлăн ирттерме, çапла вара кăçалхи финанс планне пĕтĕмпех тултарса çитерме мобилизацилемелле. Эпир çак çула бюджетăн тупăшсен планне, çавăн пекех тата халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана йăлтах пурнăçланипе вĕçлеме тивĕçлĕ.

Финанс планне тултарас тĕлĕшпе Советски, Шупашкар, Елчĕк, Чурачăк районĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Тăваттăмĕш кварталти плана ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне Советски район 84,2 процент, Шупашкар районĕ 56,6 процент, Елчĕк районĕ 56,4 процент, Чурачăк районĕ 50 процент тултарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ, тăваттăмĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура пĕррĕмĕш вырăн йышăннă Советски района 8.000 тенкĕ, ку районри финанс отделĕн заведующийне Свешников юлташа 1.000 тенкĕ парса премилерĕ. Шупашкар районне 5.000 тенкĕ, вăл районри финанс отделĕн заведующийне Алексеев юлташа 800 тенкĕ парса премиленĕ. Тăваттăмĕш кварталти финанс планне тултарас енĕпе халĕ Вăрнар, Куславкка, Октябрьски, Красноармейски, Вăрмар районĕсем начар мар ĕçлеççĕ.

Анчах та, республика тăрăх илсен, финанс планне тултарасси çителĕксĕр пырать-ха. Тăваттăмĕш кварталти плана ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 40.5 процент çеç тултарнă. Уйрăмăнах Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Йĕпреç, Канаш, Калинино, Сĕнтĕр, Шăкасан, Етĕрне районĕсем юлса пыраççĕ. Асăннă районсенчи финанспа совет органĕсен руководителĕсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн VIII-мĕш сессийĕ йышăннă решенисенчен тивĕçлĕ выводсем туман. Çавăн çинчен калать ĕнтĕ вĕсем финанс планне тултарас тĕлĕшне начар ĕçлени те.

Пирĕн республика иртнĕ çулсенче халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни кварталтах ăнăçлăн тултарса тата ирттерсе тултарса пынă. Районсен руководителĕсем, пуринчен малтан, райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райком секретарĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас ĕçе куллен ертсе пынă пулсан, партипе комсомол организацийĕсене, ялсенчи актива мобилизацилене пулсан, финанс органĕсен, уйрăмăнах налог агенчĕсен, ĕçне куллен йĕркелесе пынă пулсан, укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни район уйăхран уйăха, кварталтан кварталла тултарса пыма пултарнă. Анчах та хăшпĕр районсен руководителĕсем çавăн пек ĕçлемеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ 1944 çулхи финанс планне тултарасси çителĕксĕр пырать. Çапла, финанс планне пĕррĕмĕш кварталта 97,6 процент, иккĕмĕш кварталта 96 процент, виççĕмĕш кварталта 72 процент çеç тултарнă. Юлашки кварталти [illegible]

[illegible]

çĕ квартал хушши ĕнтĕ Октябрьски район республикăра малти вырăна тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Унта тăваттăмĕш кварталти плана тултарасси те ăнăçлă пырать. Район руководителĕсем финанс планне тултарассишĕн, ытти нумай ĕçсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнĕ пекех, тимлĕн тăрăшаççĕ. Финанс планне тултарни Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче халăх хуçалăхĕшĕн питех те кирлĕ пулса тăнине вăл районра тĕрĕс ăнланса илнĕ. Районри финанс отделĕн заведующийĕ Егоров тата райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов юлташсем кашни вунă кунран финанс агенчĕсемпе ялсовет председателĕсен канашлăвĕсене ирттереççĕ. Вăл канашлусенче финанс агенчĕсем тата ялсовет председателĕсем хăйсем иртнĕ вунă кун хушшинче тунă ĕçсем çинчен каласа параççĕ, çитес вунăкунлăхра пурнăçа кĕртме обязательствăсем илеççĕ. Çакă вара финанс планне тултарас ĕçре пысăк усă парать.

Налог агенчĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн организацилесе пыраççĕ. Ăмăрту итогĕсене яланах финанс агенчĕсемпе ялсовет председателĕсен районри канашлăвĕнче сӳтсе яваççĕ. Малта пыракан ялсоветсене пама райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă. Вăл ялава кашни уйăхрах ăмăртура мала тухнă ялсоветне параççĕ.

Финанс планне мĕнле тултарни çинчен райсовет исполкомĕ финанс агенчĕсемпе ялсовет исполком председателĕсен отчечĕсене итлет. Кашни агент тата ялсовет председателĕ районри финанс пайĕпе райсовет исполкомĕнчен вунă кунхи ĕç планне илсе тăрать. Ăна мĕнле пурнăçланине финанс агенчĕсен канашлăвĕнче тĕрĕслеççĕ.

Çакăн пек ĕçлени финанс агенчĕсемпе ялсовет председателĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме, çапла вара ĕçе лайăхлатма пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ Октябрьски район финанс планне тултарас тĕлĕшпе çитĕнӳсем туса пырать. Республикăри пур районсенче те çавăн пек ĕçлемелле тăвас пулать.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тата ăнăçлăн тултарасси, пуринчен ытла, налог агенчĕн ĕçĕнчен килет. Çакна çирĕплетсе пама нумай фактсем илсе кăтартма пулать. Советски районри Асламас ялсоветĕнчи налог агенчĕ Е. Сергеева юлташ укçа-тенкĕ пухмалли плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 75 процент тултарнă. Мĕншĕн тесен вăл ялсовет председателĕпе яланах тачăн çыхăнса ĕçлет, финанс планне тултарас ĕçе ялти актива, учительсене, комсомолецсене, ялсовет депутачĕсене явăçтарать. Колхозниксем патĕнче пулса Сергеева юлташ массăллă-ăнлантарулла ĕç туса пырать. Ĕçре йывăрлăхсем пулсан, районри финанс пайĕнчен е тата райсовет исполком председателĕнчен пулăшу ыйтать.

[illegible]

Çамрăксем, йĕлтĕрпе çӳреме вĕренĕр!

Йĕлтĕр спортне совет çамрăкĕсем хытă юратаççĕ. Мĕншĕн тесен вăл çынна сывлăхне тĕреклетет, ăна хаюллă тата тӳсĕмлĕ пулма пулăшать.

Халĕ тăван Хĕрлĕ Çар нимĕç тискеррисене пĕтерсе пынă вăхăтра, йĕлтĕр спорчĕн пĕлтерĕшĕ никхăçанхинчен ытларах ӳсрĕ. Кашни çамрăк рабочине колхозника, служащине вĕренекен йĕлтĕрпе çӳреме вĕренме тивĕçлĕ. Комсомол организацийĕсемпе физкультура коллективĕсен хĕллехи тапхăрта çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе уйрăмăнах тимлĕн ĕçлемелле. Ку ĕçе пурнăçа кĕртме иртнĕ çулта 20 сехетлĕ программăна вĕренсе пĕтернĕ комсомолецсемпе çамрăксене пурне те явăçтармалла. Кăçал çамрăксене 30 сехетлĕ программа тăрăх вĕрентесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Республикăри комсомол тата спорт организацийĕсен темиçе пин мăшăр йĕлтĕр пур. Анчах та вăл çителĕксĕр-ха. Çавăнпа та çак кунсенчех йĕлтĕр базисене юсамалла, унти мĕнпур спорт инвентарĕсене йĕркене кĕртмелле. Çав базăсем çумĕнче йĕлтĕрсем юсама ремонтнăй бригадăсем туса, вĕсене кирлĕ инструментсемпе материалсене тупса памалла. Промысла кооперации артелĕсемпе промышленность предприятийĕсенче йĕлтĕрсем туса кăларассине ӳстермелле. Кусемсĕр пуçне, комсомолецсемпе çамрăксен килĕсенче те йĕлтĕрсем тăвассине организацилемелле. Йĕлтĕрсем тăвасси йывăр ĕç мар, ăна кашни çамрăк тума пултарать.

Йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе сывăх кунсенчех йĕлтĕрçĕсен подразделенийĕсене тумалла. Отделенисем 10—15 çынран, взводсем 30—50 çынран пулмалла. Вара кашни кунхи пушă вăхăтра усă курса тренировка тума тытăнмалла. Спорт обществисен йĕлтĕрпе çӳреме вĕренекенсене пулăшма квалификациллĕ инструкторсемпе тренерсем уйăрмалла.

Çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме лайăх вĕрентессишĕн комсомолпа физкультура организацийĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Подразделенисенчи кашни боец занятисене йĕркеллĕ çӳремелле тăвас пулать. Программăна икĕ уйăхра е икĕ уйăх çурăра вĕçлес тесен, занятисене эрнере икĕ хутчен, ик-виç сехет хушши ирттермелле.

Йĕлтĕр спортне вĕренни — тăван çĕршыва сыхлама хатĕрленни пулать. Çакна кашни çамрăк патриотăн асра тытмалла. Йĕлтĕрçĕсен вăрçă вăхăтĕнче тĕл пулма пултаракан йывăрлăхсене çĕнтерме, йĕлтĕр çинче вăрçă хатĕрĕсемпе çӳреме, квалификациллĕ разведчик, пултарулла связист пулма хăнăхмалла.

Çак специальноçсене вĕренес тесен, чăнласах тимлĕн вĕренни кирлĕ. Тӳрем мар вырăнсенче хăвăрт çӳреме, çырма-çатрасенче, тăвайккисенче, вăрмансенче çӳреме хăнăхмалла, кăçхи походсем туса ирттермелле. Компассемпе, çăлтăрсен тата йывăççен паллисемпе усă курса çӳреме вĕренмелле. Йĕлтĕр çинченех штык вĕççĕн çапăçма, пăшал пеме, граната ывăтма вĕренмелле.

Йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçĕн пахалăхне ӳстерес тата çак ĕçе çамрăксене йышлăн явăçтарас тĕлĕшпе физкультура коллективĕсемпе комсомол организацийĕсем хушшинче йĕлтĕрлĕ ăмăртусем туса ирттермелле. Учрежденисемпе заводсен, вĕренӳ заведенийĕсен спартакиадисене ирттермелле. Вырăнти пичетпе тата радиопа усă курни те, çавăн пекех Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе, йĕлтĕр спорчĕн мастерĕсемпе калаçусем ирттерни те йĕлтĕрçĕсен йышне ӳстерме пулăшать.

Йĕлтĕрçĕсен подразделенийĕсенче 45 сехетлĕ программа тăрăх вĕренсе инструктор-командирсем хатĕрлемелле. ВЛКСМ горкомĕсемпе райкомĕсен, физкультура организацийĕсемпе пĕрле, йĕлтĕрçĕ-инструкторсем хатĕрлес тĕлĕшпе шкулсем организацилемелле. Çав шкулсенче вĕрентме лайăх тренерсемпе вĕрентекенсем уйăрмалла, инвентарьсемпе пособисене тупса памалла.

Шкул ачисем те йĕлтĕр спортне питĕ юратаççĕ. Вĕсене çак ĕçре пулăшса пымалла. Тăван çĕршыва чĕререн юратакан совет çамрăкĕсем çирĕп ӳт-пӳллĕ те хаюллă тата патвар пулса ӳсчĕр.

Г. ПЕТРУХИН.
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Шкулсенче вăрçă ĕçне вĕрентессине лайăхлатмалла

ЧУРАЧĂК. Шкулсенче вăрçă ĕçне вĕрентес ĕç калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Нумай шкулсен директорĕсемпе военрукĕсем çакна лайăх ăнланса илнĕ, вăрçă ĕçне вĕрентес ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ.

Шуркассинчи вăтам шкулта программăпа пăхнă материала вĕреннисĕр пуçне, Отечественнăй аслă вăрçă çинчен час-часах калаçусем ирттереççĕ. Н. Сергеевпа С. Григорьев военруксем тăрăшнипе кунта спорт обществи организациленĕ. Вăл обществăра сапер ĕçне, топографи, гимнастика ĕçне тата штык вĕççĕн çапăçма вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ. Кружоксем план тăрăх ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă геройĕсен сăнĕсене хаçатсем çинчен касса илсе классенче витринăсем тунă. Шкулта тата кашни класрах стена хаçачĕсем тухаççĕ. Вĕренӳре кирлĕ хĕçпăшалсемпе вĕсен макечĕсем те шкулта çителĕклĕ, вĕсене уйрăм кабинетра сыхласа усраççĕ. Кунсăр пуçне, пăшал пемелли тир тунă.

Янчеллăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти И. Федоровпа Чăрăш шкулĕнчи В. Андреев военруксем занятисене яланах лайăх ирттереççĕ, вĕсене вĕренекенсем юратаççĕ.

Анчах та ачасене вăрçă ĕçне вĕрентессине пур шкулсенче те тивĕçлипе туса пымаççĕ-ха. Высоковкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вăрçă ĕçне вĕрентме тунă кружоксен занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пымаççĕ. Занятисем ирттерме шкулта учебнăй винтовка, площадка тата тир çук.

Шкул директорĕсемпе военруксен çамрăксене вăрçă ĕçне вĕрентессине тĕпренех лайăхлатмалла.

А. МИРОНОВА,
Районри çутĕç пайĕн инспекторĕ.

Малта пыракан ял Совет исполкомĕ

ЧУРАЧĂК. Ял Совет исполкомĕ — государство власĕн ялти органĕ пулса тăрать. Унăн, хăйне панă правăсемпе усă курса, колхозсемпе шкулсене, вулав çурчĕсемпе медицина пункчĕсене лайăх ĕçлеттерессишĕн, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татассишĕн тăрăшмалла.

Янчеллă ял Совечĕн исполкомĕ хăйĕн мĕнпур ĕçĕсене çак енĕпе туса пырать. Кăçал ял Совет исполкомĕн 22 лару пулнă, вĕсенче пурĕ 72 ыйту пăхса тухнă. Вĕсен шутĕнче тырпул пухса кĕртес ыйтусем 8, благоустройство ыйтăвĕсем 3, государство умĕнчи парăмсене парса татас ыйтусем 3, фронтовиксен çемьисене пулăшас ыйтусем 2 тата ыттисем те. Ял Советĕнче яланлăх комиссисем 4 ĕçлеççĕ. Вĕсем ял Совет исполкомне тимлĕн пулăшса пыраççĕ. Исполком членĕсем ларусене лайăх хатĕрленсе пычăр тесе, вĕсене лару пуласси çинчен вăхăтра пĕлтереççĕ. Çавăнпа ларусем активлă иртеççĕ, вĕсенче яланах конкретлă решенисем йышăнса хăвараççĕ. Çав решенисем исполком членĕсем çине тăрса ĕçленĕ май, лайăх пурнăçланса пыраççĕ. Ял Совет исполкомĕн председателĕ Я. Львов юлташ час-часах колхозсемпе фермăсене, шкулсемпе вулав çурчĕсенче пулса, унти ĕçсемпе интересленет, пулăшу парать. Ял Совет исполкомĕ тăрăшса ертсе пынипе кăçал колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлерĕç. Государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç. Выльăхсем ĕрчетмелли плана ял Советĕнчи колхозсем пур выльăхсем енĕпе те тултарнă.

Ял Совет исполкомĕ культурăллă-массăллă ĕçе яланах малти вырăна хурать. Ку ĕçе вĕсем вулав çурчĕ урлă туса пыраççĕ. Унăн заведующийĕ Т. Ефремова юлташ хăй ĕçне тăрăшса туса пырать. Ялти ĕççыннисем вулав çуртне çӳресе çĕнĕ хыпарсем пĕлеççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ, лекцисемпе докладсем итлеççĕ.

Ял Советне 7 колхоз кĕрет. Вĕсенче пуринче те санитари уполномоченнăйĕсем пур. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă участокра тасалăхшăн тăрăшаççĕ. Колхозниксем елле пурăннипе паллашса кирлĕ сĕнӳсем параççĕ, вĕсене таса пурăнма вĕрентеççĕ.

П. МАТВЕЕВ.
Райсовет исполком председателĕн заместителĕ.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

Çĕрпӳ районĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхоз кăçал вăйлă тырпул пухса илчĕ, пур ялхуçалăх ĕçĕсене те вăхăтра та ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Колхоз чысне çӳлте тытас тесе, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç, паттăр Хĕрлĕ Çара лайăх пулăшса пычĕç.

Государствăна тырă срокчен парса татассишĕн, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă парассишĕн пынă Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура хамăр çине илнĕ обязательствăна пĕтĕмĕшпех пурнăçларăмăр. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 340 пăт тырă, 90 центнер çĕрулми патăмăр. Колхоз хĕле тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ, çакăнпа пĕрлех çуракине те хĕрсех хатĕрленетпĕр. Выльăхсем валли таса та ăшă витесем юсаса йĕркелерĕмĕр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултартăмăр.

1945 çулта эпир тырпул тухăçлăхне малалла ӳстерессишĕн, тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсене татах та ытларах пухса илессишĕн кĕрешетпĕр. Колхоз çуркунне акмалли çĕр лаптăкне 100 процентпех кĕрхи çĕртме туса хăварчĕ. Вăрлăхсене çителĕклĕ таран уйăрса, вĕсене сортласа кладовщик аллине акт тăрăх патăмăр, хурал ĕçне лайăх организацилерĕмĕр. Ĕç лашисене, ялхуçалăх машинисемпе инвентаре уйăрса бригадăсене патăмăр, майракаллă шултăра выльăхсене кӳлме вĕрентессине организацилерĕмĕр.

Колхоз Хĕрлĕ Çара пулăшас, тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе чыслăн ĕçлет. Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене колхозниксем хушшинче 25.000 тенкĕлĕх сарса, укçине çийĕнчех парса татрăмăр. Фронтовиксен çемьисемпе ачисене пулăшас енĕпе те колхоз тăрăшса ĕçлерĕ, вĕсене пур майпа та пулăшу паратпăр. Паянхи кун тĕлне вĕсем валли 6 центнер тырă, 140 килограмм аш-какай, çу тата çăмарта уйăрса патăмăр, кунсăр пуçне ăшă япаласем пухса паратпăр.

Халĕ ялхуçалăх продукчĕсене тĕплĕн шутласа тухса, тырпулпа тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеçме хатĕрленетпĕр.

С. СЕМЕНОВ.
Çĕрпӳ районĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхоз председателĕ.

ХАВАТЛА ЭЛЕКТРОТУРБИНА ПРОМЫШЛЕННОÇА ТОК ПАНА

Донбасри «Штергрэсс» ятлă чи вăйлă электростанцире хăватлă электротурбинăна хута янă. Вăл промышленноçа электричество токĕ пама пуçланă ĕнтĕ. Донбасри промышленность сĕчĕрен 22 пин киловатт энерги илет. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Венло хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре (Голланди) союзниксен çарĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ.

Гейленкирхен хули районĕнче (Германи) çаплах çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен чаçĕсем Лон хулине туртса илнĕ. Вейсвейлер хулин кăнтăр-хĕвеланăç тулашĕнче союзниксем тăшманпа хула урамĕсенче çапăçаççĕ.

Мец хулинчен хĕвелтухăçнерехре Рейчинген, Инсинген тата Каппелькингер хулисене тăшмантан тасатнă.

Финштингер хулинчен хĕвелтухăçнерехре (Лотаринги) союзниксен çарĕсем Саар шывĕ урлă каçнă та Постдорф хули тулашне çитнĕ. Страсбург хулине тăшмантан тасатса пĕтернĕпе пĕрех. Кунта 2.000 нимĕçе ярăн тыткăна илнĕ. Унсăр пуçне тата хула таврашĕнче тыткăна илнĕ нимĕçсен шучĕ те самаях пысăк.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ çанталăк начар тăнă пирки вăйлах çапăçайман.

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армири Англи чаçĕсем виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшмана Монтоне тата Козина шывĕсем çинчи оборона позицийĕсенчен хĕссе кăларнă та Ламоне шывĕ еннелле куçса пыраççĕ. Танковăй чаçсен патрулĕсем пехотăпа пĕрле Фаэнц хулин хĕвелтухăç тулашне çитнĕ. 5-мĕш арми секторĕнче тăшман союзниксен оборонине çапăçса пĕлме хăтланнă, анчах та пĕр çитĕнӳ те тăвайман, союзниксем тăшмана каялла хăваласа янă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 450 вĕçев ытла тунă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Венло хулин (Голланди) хĕвеланăç енчи оборона сооруженийĕсем патĕнче пĕрлешнĕ те халĕ малалла, çурçĕрелле куçса пыраççĕ.

Гейленкирхен секторĕнче (Германи) улшăнусем пулман.

Юлих хулинчен хĕвеланăçнерехре (Германи) союзниксен çарĕсем Бурхейм хулине туртса илнĕ. Вейсвейлер хули хĕррипче урамри çапăçусем пыраççĕ. Пĕр пунктра союзниксен çарĕсем Вейсвейлер хулипе Лангервеа хули хушшинчи çул çине тухнă.

Гюртген хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Гроссхау хулине пырса кĕресси темиçе çĕр ярд кăна юлнă. Гюртген хулине союзниксен артиллерийĕ персе тăрать.

Тионвиль хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре (Франци) союзниксен çарĕсем Германи чикки урлă каçса кайнă та Ремих хулинчен виçĕ миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Тетинген патне çитнĕ. Мерциг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Биринген хулине туртса илнĕ.

Мец хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Сент-Аво хулинчен 7 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехри пункта çитнĕ. Финштингер хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Альберсдорф вăрманне тăшмантан тасатнă. Союзниксен патрулĕсем унтан хĕвелтухăçнерехре ларакан Жимрикур вăрманне кĕрсе кайнă. Финштингер хули районĕнче Саар шывĕ урлă каçнă отрядсем Берендорф хулине ирĕке кăларнă. Çавăн пекех тата Çурçĕр Эльзас тӳремĕнче тата Вогез тăвĕсен районĕнче те самаях пысăк çитĕнӳсем тунă. Унта тăшман начар хирĕç тăрать.

Страсбург хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Рейн çинчи кĕперсене кăна нимĕçсем тытса тăраççĕ. Страсбургра тыткăна илнĕ нимĕçсен шучĕ 5.000 çынна çитнĕ.

Сен-Дье районĕнчен Страсбург патнелле куçса пыракан союзниксен çарĕсем Çурçĕр Вогез тăвĕсем çинчи Зааль проходĕнчен пĕтĕмĕшпе теНĕ пекех иртсе кайнă. Кăнтăрти Вогез тăвĕсем çинче тата Бельфор проходĕн районĕнче тăшмана Бельфор хулинчен хĕвелтухăçнерехри тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенчен хăваласа кăларнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене нумай тĕлте хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

8-мĕш армири Англи чаçĕсем, каялла чакакан тăшмана хытă хăваласа пырса, Фаэнц хулинчен çурçĕртерехре сарлака фронтпа Ламоне шывĕ çине тухнă. Фаэнц хулинчен кăнтăртарахра акăлчансен пехоти, танксем пулăшнипе, Мардзоне шывĕ çинче тăшмана тапăнмалли укреплени тунă та Ламоне шывĕ патнелле малалла куçса пырать, унта тăшман йĕркеллĕ хирĕç тăни çук. Çак секторăн сулахай флангĕнче 8-мĕш арми чаçĕсем Мардзоне шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре тăшман хирĕç тăнине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă. Союзниксен патрулĕсем Мардзоне шывĕ урлă темиçе тĕлте те каçса кайнă. Пистойя хулипе Болонья хули хушшинчи шоссе çулĕнчен хĕвеланăçнерехре 5-мĕш армири Америка чаçĕсем ăнăçлă операцисем тунă хыççăн Монте Бельведере ятлă паха çӳллĕ вырăна тытса илнĕ. Тăшман, çаванти позицисене каялла туртса илме хăтланса, темиçе хут та контратака тунă, анчах нимĕçсен контратакисене пурне те сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ Германие тапăнни

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри авиацийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: ноябрĕн 25-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсем нимĕçсен пĕр синтетически горючи заводне тата Мерзебургпа Бинген хулисенчи вăрçă объекчĕсене тапăннă. Америка бомбардировщикĕсене пĕр пин ытла истребитель хӳтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: ноябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсен эскадрильисем Нюрнберг хулине тата Хĕвеланăç Германири ытти пунктсене те тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен йывăр бомбардировщикĕсем 1.100 самолет ытла, 700 истребителе яхăн хӳтĕлесе пынипе, Ганновер хули çывăхĕнчи Мисбургри нефть тасатакан завода, Билефельд хулинчи чугун çул виадукне, Гамм хулинчи сортировка станцине тата Çурçĕр-хĕвеланăç Германири ытти вăрçă объекчĕсене те тапăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерчĕ: ноябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Берлина тапăннă.

США конгресĕн представителĕсем Лондона пынă

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 25-мĕшĕнче Лондона США-ри представительсен палатин вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕн 17 членĕ çитнĕ. Вĕсем Англире вăрçă объекчĕсемпе паллашасшăн тата фронтсене кайса курасшăн.

ЮГОСЛАВИРЕ НИМĔÇ ГРАЖДАНĔСЕН ПУРЛĂХНЕ КОНФИСКАЦИЛЕНИ

БЕЛГРАД, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави Халăхне Ирĕке Кăларассишĕн Фашистсене хирĕç Кĕрешекен Вече Президиумĕн нимĕçсен, çавăн пекех тата вăрçă преступникĕсемпе вĕсене пулăшакансен пурлăхне государство аллине парасси çинчен калакан постановленийĕ тăрăх, Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Сутуилӳпе промышленность комиссариачĕ распоряжени пичетлесе кăларнă. Çав распоряжени тăрăх, промышленноçпа сутуилĕвĕн 2.000 предприятийĕ, чылай банксем тата ялсенчи 30 пин хуçалăх государство аллине куçаççĕ.

Конфискациленĕ предприятисенче чылайĕшĕнче ĕнтĕ комиссариат уйăрса лартнă управляющисем ĕçлеме тытăннă.

ФИНЛЯНДИРИ ФАШИСТСЕН «ЛОТТА—СВЯРД» ОРГАНИЗАЦИНЕ САЛАТСА ЯНИ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинки хулинче тухса тăракан хаçатсем официальнăй йĕркепе панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: перемири çинчен тунă килĕшӳвĕн 21-мĕш статьи тăрăх, ноябрĕн 23-мĕшĕнче государство совечĕ «Лотта—свярд» организацине тата унăн мĕнпур отделенийĕсене те салатса ямалла тунă. («Лотта—свярд» вăл — Финляндири фашистсен хĕрарăм организацийĕ).

БАЯТ ИРАНĂН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУСА ЙĔРКЕЛЕНĔ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Баят (Сахом-Эс-Салтане) паян Иранăн çĕнĕ правительствине тунă та шах умне тăратнă. Иран çĕнĕ правительствăна Иран меджлисĕ çирĕплетсе памалла.

БРЮССЕЛЬ ХУЛИНЧИ ДЕМОНСТРАЦИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 25-мĕшĕнче Брюссель хулинче пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Демонстраци тăшмана хирĕç тăнă Бельгири чи пысăк ушкăнсенчен пĕри «Фрон Энделпандандс» пухса ертсе пынă. Демонстрацире темиçе пин çын пулнă. Демонстрантсем министерствăсем ларакан района çитсен, вĕсене полици хирĕç тăнă, вăл демонстрантсене пеме пуçланă.

Брюссельре официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: демонстрантсене 31 çынна амантнă. Полицейскисенчен 3 çын аманнă.

БОНОМИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Римран пĕлтернĕ тăрăх, Итали премьер-министрĕ Иваноэ Бономи тата пĕтĕм правительство вырăнтан тухнă.

АМЕРИКАНЕЦСЕН «ВĔÇЕКЕН КРЕПОСТЬ» ЙЫШШИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ТОКИО ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 24-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксен пысăк вăйĕсем Токио хулине тапăннă. Тапăну кăнтăрла пулса иртнĕ. Тапăнура пулнă бомбардировщиксем Марнан утравĕсен шутне кĕрекен Сайпан утравĕ çинчи базăсем çинчен вĕçсе хăпарнă.

Америка çарĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен командующийĕ Арнольд генерал çапла каланă: халĕ Америка самолечĕсем пĕтĕм Япони империне вĕçсе çитсе тапăнма пултараççĕ. Юлашки тапăнура Токио хулинчи промышленноçа пысăк сиен кӳнĕ, тенĕ.

ТОКИО, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви Японин император ставки пĕлтернине панă. Пĕлтерӳре çапла каланă: «Ноябрĕн 24-мĕшĕнче Мариан утравĕсем çинче вырнаçса тăракан Америка бомбардировщикĕсем, питĕ çӳлтен ушкăн хыççăн ушкăн вĕçсе килсе, столица районне тапăннă. Тапăну 2 сехете яхăн пынă», тенĕ. Кăтартнă тăрăх, тапăнура 70 бомбардировщик пулнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ КЮСЮ УТРАВНЕ ТАПĂННИ

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: американецсен китайри авиацийĕн «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлăрах бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем Японин Кюсю утравĕнчи промышленность объекчĕсене тапăннă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти фельдшер шкулне завхоз, дворник, техничкăсем тата делопроизводитель кирлĕ. Вĕсене хваттер тата вутă параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 36.

Хусан чугун çулĕн 17-мĕш дистанцине старши бухгалтер тата бухгалтерсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: станция Чебоксары, 17-ая дистанция, Главному бухгалтеру.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—81, издательство конторин — 0—23.

НТ 04214 Типографи № 1, Управления полиграфии издательств при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 в. л. Тираж 16.000 экз.